**Рабочая программа**

**по учебному предмету «Чувашский язык» в 1- 4 классах (предметная область «Родной язык и литературное чтение на родном языке»)**

***Рабочую программу составили***
***учителя начальных классов***
***МБОУ «Еметкинская средняя общеобразовательная школа»***
***Козловского муниципального округа Чувашской Республики***

## Умĕн калани

Ку ĕç программине  Чăваш Республикин Куславкка районĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан  муниципаллă бюджетлă "Кунерти пĕтĕмĕшле пĕлу паракан вăтам шкулăн" вĕренӳ  планĕ тата«Тăван чĕлхепе литература вулавĕн тĕслĕх программисем: чăваш шкулĕн 1-4 класĕсем валли. М.К. Волков, Л.П. Сергеев, Т.В. Артемьева, О.И. Печников,А.Р. Кульева.- Шупашкар: Чăваш Республикин вĕрентӳ институчĕн издательство центрĕ, 2013.- тĕпе хурса хатĕрленĕ.

**Программăна пурнăçлама çак   вĕренӳ  хатĕрĕсемпе усă курнă:**

Артемьева Т. В., Волков М.К.,. Сергеев Л.П. Вĕренӳ пособийĕ.  Чăваш букварĕ: 1-мĕш класс валли – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2015 çул;

Вĕренӳ пособийĕ.     Чăваш  чĕлхи. 2 класс  валли.  Л. П. Сергеев, Т. В. Артемьева,  А. Р. Кульева, Шупашкар:  Чăваш кĕнеке издательстви: 2016 çул;

Вĕренӳ пособийĕ. Чăваш  чĕлхи. 3 класс  валли.  Л. П. Сергеев, Т. В. Артемьева,  А. Р. Кульева, Шупашкар:  Чăваш кĕнеке издательстви: 2013 çул;

Вĕренӳ пособийĕ. Чăваш чĕлхи.  Виноградов Ю. М., Кульева А. Р. 4 –мĕш класс валли. Шупашкар. Чăваш кĕнеке издательстви, 2014 çул;

## Ачасенчен 1-4 класран вĕренсе тухнă тĕле кĕтекен результатсем

### 1. ПРЕДМЕТĂН ПУЛАС РЕЗУЛЬТАЧĔСЕМ

## *1 класран вĕренсе тухнă тĕле кĕтекен результатсем*

**Харкамлăх результачĕсем:**

-ачасем  хăйсем вĕренекен пулнине  ăнланни, вĕренекенĕн яваплăхĕсене уçăмласа пыни,

- ачасем Тăван çĕршыв, тăван халăх ывăл- хĕрĕ пулнине ăнланни, вĕсен тăван халăха хисеплес туйăм амаланма пуçлани;

- ачасем таврари пурнăç, этем,çут çанталăк çинчен мĕн пĕлни анлăланма пуçлани, тавра курăмĕ йĕркеленсе пыни;

- хрпăр хăйĕн тата тантăшĕсен ĕç-хĕлне сăнас -хаклас ăслай –хăнăхусене алла илсе пыни.

**Предметăн пĕрлĕхлĕ результачесем:**

-ачасен шухăшлавĕ пур енлĕн аталанса пыни, вĕсем тишкеру, пĕтĕçтеру, пĕтĕмлету ĕçĕсене вĕренсе пыни;

- ачасен пуплевĕ пур енлĕн аталанса, вĕсем пуплев ĕç-хĕлĕсене (итлев, çыру, калу) вĕренсе пыни;

- кĕнекепе ĕçлеме  вĕренсе пыни;

**Предметăн пайрам результачĕсем:**

- тăван чĕлхери тĕп сасăсене, вĕсене палăртмалли сас паллисене, сăмахри сасăсен пахалăхне ( уçă е хупă), йĕркине, хытă тата  çемçе сасăсене сăмахра паллама, çырура палăртма пĕлни;

- сăмахсене, предложенисене, пысăк мар тĕрлĕ жанрлă текстсене вуласа ăнланма пултарни;

- пур сасă пуххи сăмах, сăмах пуххи предложени пулайманнине ăнланни;

- сас паллисене ( пĕчĕккисене тата пысăккисене), çыхăнăвĕсене,  сăмахсене, предложенисене тĕрĕс евĕрлесе çырса илме, тĕрĕслеме вĕренни;

- уйрăм сăмахсене, 3-4 сăмахран тăракан, тытăмĕпе ансат предложенисене илтнĕ тăрăх çырма пултарни;
- чĕлхе пĕлĕвĕн хăш-пĕр ансат ăнлавĕсемпе терминĕсене (уçă е хупă сасă, сас палли, сыпăк, сăмах, предложении, текст) уçăмлани.

## *2 класран вĕренсе тухнă тĕле кĕтекен результатсем*

**Харкамлăх результачĕсем:**

- тăван чĕлхене хаклама, хисеплеме хăнăхса пыни;
- кашни халăхăн хăйĕн чĕлхи пулнине, вăл ыттисенчен уйрăлса тăнине ăнланни;
- чĕлхепе кăсăкланма пуçлани, харпăр хăй пуплевне лайăхлатас кăмăл-туйăм амаланни.

**Предметăн пĕрлĕхлĕ результачĕсем:**

- пулăмсене тарăнрах ăнланма вĕренсе пыни;
- ăнлавсене уçăмлама, ушкăнлама хăнăхса пыни;
- тишкеру- пĕтĕçтеру, танлаштару хăнăхĕвĕсем çирĕпленсе пыни.

**Предметăн пайрам результачĕсем:**

- ачасем алфавитри сас паллисене, вĕсен пĕлтерĕшĕсен, уçă тата хупă сасăсен уйрăмлăхĕсене, сăмахри , уçă сасă çине пусăм укни-укменнине, сасăсем хытă тата çемçе пулнине, сăмахсене пĕр йĕркерен теприне мĕнле куçармаллине пĕлни;
- 35-40 сăмахлă текста каллиграфии тĕлĕшĕнчен тĕрĕс те таса, сас паллисене сиктерсе хăвармасăр, пăтраштармасăр çырма пултарни;
- 25-30 сăмахлă текста итленипе (диктант) çырма вĕренсе пыни;
- сăмаха сыпăклама, пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене тĕрĕс куçарма, çемçе хупă сасăсене çырура тĕрĕс палăртма, вăрăм хупă сасăллă сăмахсене (программăра кăтартнисене) тĕрĕс çырни;
- çын ячĕпе хушаматне, ашшĕ ятне, выльăхсемпе чĕр чунсен уйрăм ячĕсене, хула, ял, урам, юхан шыв ячĕсене пысăк сас паллипе пуçласа çырма пултарни;
- сăмахсен сасă тытăмне тишкерме (вĕсене сыпăклама, уçă тата хупă сасăсене, сасăсемпе сас паллисен йĕркине тата хисепне палăртма) пĕлни;
- япалана , унăн ĕçне, паллине пĕлтерекен сăмахсене ыйтăвĕ тăрăх ушкăнлама пултарни;
- предложенин тĕп членĕсене – подлежащипе сказуемăя- тупма пĕлни;
- ыйтусем тăрăх ансат предложени членĕсем хушшинчи çыхăнăва палăртма вĕренни;
- предложение пысăк сас паллирен пуçласа çырма, ун вĕçне, интонацие кура, пăнчă, ыйту е кăшкăру палли лартма пĕлни;
- 30-45 сăмахлă текст тăрăх ыйтусене хуравласа изложени çырма; 2-3 предложнениллĕ текст тума пултарни.

## *3 класран вĕренсе тухнă тĕле кĕтекен результатсем*

**Харкамлăх результачĕсем:**

- ачасен тăван чĕлхене тĕплĕнрех вĕренес, харкамăн пуплев ĕç-хĕлĕсене аталантарас кăмăлĕ амаланни;
- тантăшĕсен тата харкам пуплевне сăнама, тĕрĕслеме вĕренсе пыни;
-тăван чĕлхе пуянлăхĕпе, илемĕпе киленме пуçлани.

**Предметăн пĕрлĕхлĕ результачĕсем:**

- тĕрлĕ текста тишкерме, турелетме вĕренсе пыни;
- пуплев культурин енĕсене тимлеме хăнăхса пыни;
- культура тата çырура пуплев тата хутшăну этикечĕн нормисене тытса пыма хăнăхса пыни;
- урокра тата тулашĕнче харпăр хăй ĕçне йĕркелеме вĕренсе пыни.

**Предметăн пайрам результачĕсем:**

-сăмахăн тĕп пайĕсем – унăн тымарĕпе аффиксĕсем; пуплев пайĕсем- япала ячĕ, глагол, паллă ячĕ; предложенин тĕп членĕсем тата кĕçĕн членĕсем пулнине пĕлни;
-вĕреннĕ орфограммасĕнчен тăракан 40-45 сăмахлă текста таса, тĕрĕс те илемлĕ çырса илме, итленипе (диктант) çырма, предложенисем вĕçĕнче кирлĕ чарану(пăнчă, ыйту е кăшкăру) палли лартма пултарни;
-сăмахсен сасă тытăмне сăнама; сыпăксене уйăрма, уçă тата хупă сасăсене палăртма, уçă сасă çине пусăм укни-укменнине пĕлме, хупă сасă хытти-çемçине, янăравлă-янăравсăррине туйма, сăмахри сасăпа саспалли хисепне уяма хăнăхса пыни;
-сăмах тытăмне (тымарĕпе аффиксне) курма пултарни;
-пуплев пайĕсене (япала ячĕ, глагол, паллă ячĕ) палăртма, вĕсем мĕнле формăрине (япала ячĕсен хисепне, глаголсен вăхăчĕпе хисепне) чухлани;
-предложенири сăмахсен çыхăнăвне асăрхама, сăмах  майлашăвĕсене уйăрни;
-предложени тытăмне( синтаксисне) ансат тишкерме (вал калуллă, ыйтуллă, кăшкăруллă е кашкăрусăр пулнине палăртма, унăн тĕп тата кĕçĕн членĕсене, вĕсем хушшинчи çыхăнăва ыйту лартса) тупма пĕлни;
-ушкăнпа тунă е хатĕр планпа усă курса 55-65 самахла изложени çырма вĕренсе çитни.

## *4 класран вĕренсе тухнă тĕле кĕтекен результатсем*

**Харкамлăх результачĕсем:**

- таса, тĕрĕс, выразлă пуплев çыннăн сапăрлăх тата пĕтĕмĕшле аталанăвĕн палăрăмĕ пулнине ăнланни;
- чĕлхепе тирпейлĕ, тĕрĕс усă курма вĕренес кăмăлĕсем çирĕпленни;
- хутшăну культурин правилисемпе килĕшуллĕн вăхăтра тав тума, каçару ыйтма, саламлама, вашават сăмах хушма, япала ыйтса илме, чĕнĕве палăртма пĕлни;
- чĕлхе харкам ăславлă пултарулăхне, шухăш вĕçевне палăртмалли, аталантармалли хатĕр пулнине ăнланни;

**Предметăн пĕрлĕхлĕ результачĕсем:**

- чĕлхе тĕп хутшăну хатĕрĕ, наци культурин единици, вĕрену тата аталану хатĕрĕ пулнине ăса хуни;
- чĕлхен тĕрлĕ çăл куçсенче кирлĕ тивĕçлĕ информации тупма, ăнăçлă усă курма хăнăхса пыни;
- чĕлхе хатĕрĕсемпе хутшăну тата вĕрену задачисемпе шайлашуллă тивĕçлĕ усă курма вĕренесе пыни.

**Предметăн пайрам результачĕсем:**

- вĕреннĕпуплев пайĕсем, вĕсен паллисем, предложенин пĕр йышши членĕсем çинчен çирĕп пĕлни;
- -вĕреннĕ орфограммасĕнчен тăракан 55-60 сăмахлă текста йăнăшсăр, таса теа илемлĕ çырса илме, диктант çырма пултарни;
- пĕр йышши членлă предложенире  (вĕреннĕ тĕслĕхсем) чарăну паллисем лартма вĕренни;
- сăмахăн сасăпа сас палли  тытăмне  тишкерме, тымарĕпе аффиксĕсене тупма  хăнăхни;
- япала ячĕсен, сăпат ылмашĕсен падежĕпе хисепне, глаголсен хисепне сăпачĕпе вăхăне палăртма пултарни;
- предложенин  ансат синтаксис тытăмне чухлама: вăл тăллевпе интонаци тĕлĕшĕнчен мĕнлине калама,унăн тĕп тата кĕçĕн членĕсене тупма,  ыйтусем тăрăх вĕсен çыхăнăвне тата пĕр йышши членсене асăрхамахăнăхса пыни;
- харпăр хăй тĕллĕн тунă планпа усă курса 80-90 сăмахлă текст тăрăх изложени çырма, пурнăçра пулни-иртни, экскурсире курни, сăнани çинчен çыхăнуллă пĕчĕк калав йĕркелеме ( сочинени çырма) вĕренсе пыни.

## 2.Предметăн шалашĕ (содержанийĕ)

**Çыхăнуллă пуплев.** Текст. Текста вуласа унăн тĕп шухăшне палăртасси. Текст ячĕ темипе, тĕп шухăшĕпе шайлашса тăни. Текст пайĕсене уйăрасси, вĕсене ят парасси. Вĕрентӳçĕ ертсе пынипе калуллă тата сăнлавлă текст планне тăвасси. План тĕсĕсем: ыйтуллă тата калуллă.
Хатĕр е ушкăнпа тунă планпа усă курса текст тăрăх изложени çырасси.
Илемлĕ текстăн ансат жанрĕсем: калав, юмах, сăвă. Вĕсен тытăмĕн уйрăмлăхĕсем. Текст пайĕсен шалашĕ пĕр-пĕринпе килĕшсе тăни.
Темиçе е пĕр ӳкерчĕк тăрăх тата пурнăçра курни-илтни (вăйăсем, ачасен ĕçĕ-хĕлĕ, çут çанталăка сăнани, тĕрлĕçĕре экскурсие кайни, ялти ватăсене пулăшни) çинчен çыхăнуллă калав йĕркелесси, ун хыççăн сочинени çырасси.
ăх сăмахĕсемпе усă курасси. Телефонпа калаçасси.
Çулĕпе аслăрах çынна чăвашла сумласа чĕнмелли сăмахсем (пичче, аппа, инке, мучи, кинемей).
**Еç хучĕсем.** Класри е шкулти хаçата заметкăсем çырасси. Библиотекăран илсе вуланă кĕнекесен списокне туса пыма пĕлесси.
**Сăмах йышне анлăлатасси**
Тăван-хурăнташа чĕнесси
Тумтир тата атă-пушмакпа çыхăннă сăмахсем
Кил-çурт таврашĕпе çыхăннă сăмахсем
Кил-çуртри япала ячĕсем
Килти кайăк-кĕшĕк ячĕсем
Килти выльăх-чĕрлĕх ячĕсем
Кайăк-кĕшĕк ячĕсем
Пулăсемпе шыври чер чунсен ячĕсем
Апат-çимĕç ячĕсем
Улма-çырла, пахча çимĕç ячĕсем
Йывăç ячĕсем
Тĕрлĕӳсен-тăран ячĕсем
Кăмпа ячĕсем
**Чĕлхене ансат тишкересси. Чĕлхе пĕлĕвĕн терминĕсемпе паллаштарасси. Сăмах тытăмĕ**

**Тымар тата аффикссем.** Сăмах тăвакан тата сăмаха улăштаракан аффикссем. Япалана пĕлтерекен сăмахсем çумне *-çă(-çĕ), -лăх(-лĕх), -у(-ӳ)* аффикссем хушăнса пулнă сăмахсене сăнасси. Пĕр тымартан пулнă сăмахсене асăрхаса ушкăнлассии, аса илсе каласси, çырасси *(çыр – çыру - çырулăх, кшш - калав - калавçă).*
**Япала ячĕ.** Унăн пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем. Пайăр ятсемпе пайăр мар ятсем. Япала ячĕсем пĕрреллĕ тата нумайлă хисепсенче пулни. Вĕсем ытти сăмахсемпе çыхăннă чухне тĕрлĕ аффикс йышăнни, ӳкĕм (падеж) термина асăнмасăр вĕсен ыйтăвĕсемпе аффиксĕсене пăхса тухни.
Камăнлăх аффиксĕсем йышăннă япала ячĕсем гĕп мар падежри пĕрреллĕ хисепри (терминсене асăнмасăр) формисемпе пуплевре усă курасси *(аттеме, аттемпе, аçуна, ашшĕне, ашшĕпе* т.ыт.те)
**Глагол.** Унăн пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем. Глагол вăхăчĕсем: хальхи вăхăт, пулас вăхăт, иртнĕ вăхăт.
**Паллă ячĕ.** Унăн пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем. Вăл япала ячĕпе тата глаголпа çыхăнни. Япала ячĕпе тата глаголпа çыхăниă паллă ячĕсем вĕçленменни. Пĕрешкел е çывăх пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем *(илемлĕ, капăр, хитре, чипер).*
**Хисеп ячĕ.** Шут тата йĕрке хисеп ячĕсем.
**Предложени.** Калуллă, ыйтуллă тата хиствлĕ предложенисем. Кăшкăруллă предложени. Предложенин тĕп членĕсем — подлежащипе сказуемăй. Предложенин кĕçĕн членĕсем. Предложенисене кĕçĕн членсемпе анлăлатасси.
**Орфографипе орфоэпи.** Э, *е, ă, ю, я* сас паллисемпе усă курма пĕлесси. Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсенче *б, г, д, ж, з, ф, ц, щ* сас паллисене тĕрĕс вулама, çырма пĕлесси.
Сăмах тĕпĕнчи вăрăм хупă сасса икĕ пĕр пек сас палли çырса палăртасси: а) *çăрттан, паттăр, параппан, суккăр, маттур, тăвайкки, тĕттĕм, турилкке;* ă) *пĕрре, иккĕ, виççĕ, пшлĕк, çиччĕ, аллă:* б) *ачашшăн, хуллен, вăрттăн, пысăккăн, симĕссĕн, шуррăн; в) валли, хыççăн.*
Хутăш сăмахри ч умĕнчи [л'], [н'] хупă сасăсен çемçелĕхне ятарласа палăртманни: калча, мунча, пăнчă, вăлча, анчах, хупăлча.
*Ç, ч* сас паллисем хыççăн *ы* е *и* çырасси: а) *çыру, çын, çырма, чылай, чыс, çывăх, çырла;* ă) *çимĕç, чикĕ, читлĕх, çинче.*

Уçă е [л] сасăпа пĕтекен сăмах тĕпĕçумне *-лă(-лĕ), -ла(-ле)* аффикссем хушăнса пулнă сăмахсенче икĕ пĕр пек сас палли (лл) çырасси: *а)лаша—лашалла, ĕне — ĕнелле, футбол — футболла, лапта-лапталла, пукане — пуканелле, шашка — шашкăлла;* ă) *сухал — сухаллă.*
Нумайлă хисеп аффиксĕнчи [с] сасса (вăл умĕнхи [ш], [ç] сасăсемпе пĕрпекленнĕ тĕслĕхсем) тĕрĕс палăртасси: *юлташсем, тантăшсем, чăрăшсем, лĕпĕшсем, чĕкеçсем.*
Хальхи вăхăтри пĕрреллĕ хисепри глаголсене тĕрĕс каласси, çырасси: *ташлатăп, вĕренетĕп, ĕçлетĕп, юрлатăп, вĕренетĕн, ĕçлетĕн, ташлатъ, юрлатъ, вĕренет, ĕçлет.*

**Таса та илемлĕçырасси**

Çыру гигиенин хăнăхăвĕсене çирĕплетесси. Пĕр йĕр тăрăх çырма хăнăхтарасси. Кăткăс ĕлкеллĕ сас паллисемпе вĕсен çыхăнăвĕ-сене хăвăртрах, таса та илемлĕçырасси.

**ПУПЛЕВЕ ПУР ЕНЛĔН АТАЛАНТАРНĂ МАЙЧĔЛХЕНЕ АНСАТ ТИШКЕРМЕ, ТЕРМИНСЕМПЕУСĂ КУРМА ВĔРЕНТЕССИ**

**Çыхăнуллă пуплев.** Пуплевĕн пурнăçри пĕлтерĕшĕ.

**Текст**. Ăна темăпа çыхăнман предложенисен пуххипе танлаштарасси. Текстра мĕн çинчен каланине (текст темине) палăртасси. Текста темиçе сыпăка (пая) уйăрасси. Пысăках мар текста, унăн пайĕсене ят парасси.

**Ӳкерчĕксемпе ĕçлесси.** Ӳкерчĕксем тăрăх ыйтусене хуравласси, предложенисем тăвасси. Вĕсене çырасси.

**Изложени çинчен ăнлантарасси.** Ыйтусене ушкăнпа хуравланă, йывăр орфограммăсене асăрхаттарнă хыççăн вĕрентуçĕ пулăшнипе 30-45 самахлă текст тăрăх изложени çырасси.

Ачасен пурнăçĕпе çыхăннă темăсемпе (вăйă выляни, вăрмана экскурсие кайни, кама та пулин пулăшни, шкул çинчен) 4-5 предложенирен тăракан пĕчĕк калав тăвасси.

**Пуплев этикечĕ.** Сывлăх сунни. Сывлăх суннă чух усă куракан тараватлăх сăмахĕсемпе сăмах майлашăвĕсем. Паллашу самахĕсемпе предложенисем. Сăпайлăн тав тума пĕлесси. Сывпуллашу сăмахĕсем.

**Ĕç хучĕсем.** Ансат пĕлтерӳ хайласси. Юлташ патне çыру çырасси.

**Сăмах йышне пуянлатасси, унпа усă курма пĕлнине çирĕплетесси**

**Тăван-хурăнташа чĕнесси:** атте, анне, асанне, асатте, кукаçи, кукамай, пичче, аппа, шăллăм, йăмăк, кукка, мăн акка, инке, мучи, кинемей.

**Тумтир, атă-пушмак ячĕсем:** пушмак, атă, çăм ата, алса, алсиш, калуш, çуха, кунча, кĕсье, карттус, майка, нуски, пиншак, тутăр, кĕпе, çанă, саппун, чăлха, çĕлĕк;вăрăм, кĕске, илемлĕ, капăр, хитре, шукăль, ăшă, çăм, пурçăн, сарлака;
хыв, хывса ил, салт, тӳмеле, çĕтĕл, пĕт, кивел, тумлан, тăхăн.

**Кил-çурт тавраш***ĕ***пе çыхăннă сăмахсем:** мунча, хапха, алăк, картиш, карта, çурт, пӳрт, кĕлет, пусă, çăл, вите, лаç, сарай, çенĕк, пӳрт ум, вутă, кухня, газ, плита, ванна, душ, туалет, кран, сивкĕч (холодильник), шăнткăч (морозильник), пулĕм, пусма, картлашка, чӳрече, кăмака, форточка, сакай, урай, мачча, хăлăп, стена, мăрье, юпа, чăлан;

çӳллĕ, ăшă, хулăн, çӳхе, таса, сарлака;

хуп, хупăн, çурăл, шăл,тасат, çу, ту.

**Кил-çуртри япала ячĕсем:** пичке, витре, чулмек, кашăк, вилка, çăра, çăраççи, чаршав, тĕкĕр, йĕп, карта, хуран, турчка, кравать, кашăк, тӳшек, сĕтел, пукан, шăпăр, михĕ, хутаç, çĕçĕ, утиял, куçлăх, минтер, çытар, çитĕ (çитти), çăпала, сак, çатма, шăрпăк, кантăк, хыçлă пукан, турилкке, чашăк, шкап, щётка, стакан.

**Килти кайăк-кĕшĕк ячĕсем, вĕсемпе çыхăннă ытти пуплев пайне кĕрекен сăмахсем:** хур, кăркка, автан, чăх, кăвакал, кайăк-кĕшĕк, хур-кăвакал;

ырхан, хыткан, начар, мăнтар, самăр;

чиклет, авăт, какала, нартлат.

**Килти выльăх-чĕрлĕх ячĕсем, вĕсемпе çыхйннă ытти пуплев пайне кĕрекен сăмахсем:** така, вакăр, тиха, ăйăр, кĕсре, качака, ут, лаша, ĕне, кушак, кролик, сурăх,

сысна, йытă, пăру, анчăк, путек, аçа, ама, выльăх, çăвăр; сĕкекен, çара, мăкла, çăмламас, ăратла, майракаллă, пĕтĕ, хĕсĕр;
кӳл (лаша), мĕкĕр, вĕр, сыхла, чăрмала.

**Кайăк-кĕшĕк ячĕсем:** акăш, ăсан, вĕçен кайăк, кайăк хур е хур кайăк, кăвакарчăн, кăсăя, куккук, курак, пăрчăкан, путене, çăхан, çерçи, тăмана, тăри, тăрна, уйăп, улатакка, хурчка, чакак, чана, чĕкеç, чĕпĕ, шăнкăрч, шăпчак.

**Пулăсемпе шыври чĕр чунсен ячĕсем, вĕсемпе çыхăнакан ытти пуплев пайĕсем:** йыт пулли, карас, карп, партас, çăрттан, çĕлен пулă, çырма пулли, çтерлĕк, шапа, шапа вăлчи, ыраш пăтри;

пулăçă, вăлта, вăлча, карас кулли, пĕве пулли, тăварла пулă, пулă шӳрпи, вĕтĕ пулă.

**Апат-симĕç ячесем, вĕсемпе çыхăнакан ытти пуплев пайĕсем:** апат, аш, икерчĕ, йăва, какай, канфет, кĕрпе, кĕсел, компот, кукăль, лапша, макарон, манна, мăйăр, мороженăй, пăтă, печени, пĕремĕк, пыл, сахăр, серте, пултăран, сĕт, чăкăт, çăкăр, çăмарта, çăнăх, çу, тăвар, тăпăрчă, турăх, уйран, улма, хăйма, чей, чуста, шаркку, шушкă, яшка;
вир (тулă, хура тул, сĕлĕ) кĕрпи, килти çăкăр, хура çăкăр, шур çăкăр, савра çăкăр, çăкăр чĕлли, сăмси, çăкăр магазинĕ, купăста (сĕт) яшки, мăйăр тĕшши, пан улми, калекле (чăмăрла) çăмарта, çăмарта хăпартни, аш (тăпăрчă) кукли, хуран кукли, çăка (чечек) пылĕ, аш апачĕ, çатма икерчи, тăпăрчă (çĕр улми) икерчи, лапша яшки, какай шӳрпи, кĕрпе яшки, сĕлĕ кĕселĕ, çырла кĕселĕ, шĕвĕ пăтă, улма нимĕрĕ, кĕрпеклĕ (типĕ) печени, катăклă сахăр, сахăр песокĕ, тулă (ыраш, сĕлĕ) çăнăхĕ;
ирхи апат, кăнтăрлахи апат, каçхи апат;
уйран уçла, компот вĕрет, варени пĕсер, пыл юхтар, йӳçĕ калать;
йӳçĕ, çуллă, çусăр, пылак, тăварлă, тăварсăр, тутлă, йӳçек, пыллă, сахăрлă;
çыртăк, касăк, татăк, чĕлĕ;
апатлан, апатлану.

**Улма-çырла, пахча çимĕç ячĕсем, вĕсемпе çыхăнакан ытти пуплев пайĕсем:** купăста, сухан, çĕр улми, кишĕр, хăяр, помидор, йӳç кăшман, сахăр кашманĕ, выльăх кашманĕ, çарăк, кавăн, ыхра, фасоль;

тутлă, йӳçĕ, хĕрхӳ, пылак, шултра, пысăк, вак, вĕтĕ, çӳллĕ, лутра, чĕрĕ, сĕтеклĕ;
шăвар, çумла, çитĕн, пиç, кас, ларт, ак, пух, пуçтар, пулса çит, тăварла, тат, çитĕнтер;
мăкăнь, нимĕç парçи, çĕр çырли, хурăн çырли, улмуççи, хăмла, хăмла çырли, хĕвел çаврăнăш, хура çырла, хурлăхан, чие, хĕрлĕ хурлăхан, хура хурлăхан;
кăшман çеçки, йăран, кишĕр сĕткенĕ, купăста калчи, купăста пуçĕ, помидор калчи, помидор сĕткенĕ, çĕр улми аври, çĕр улми купала, ыхра шăлĕ, хăмла пахчи, хăмласа, хăяр калчи, хĕвел çаврăнăш пуçĕ (çăвĕ).

**Йывăç ячĕсем:** ăвăс, йăмра, йĕлме, кавраç, палан, пилеш, çăка, çĕмĕрт, çирĕк, çӳçе, тирек, хăва, хурăн, хыр, чăрăш, шăлан, шĕшкĕ, юман;
ăвăслăх, йăмралăх, йĕлме йĕлтĕр, палан çырли, паланлăх, хура пилеш, пилеш çупкăмĕ, çăка пылĕ, çăка чечекĕ, çăкалăх, çĕмĕрт çеçки, çирĕклĕх, çӳçелĕх, тирек мамăкĕ, тиреклĕх, хăва хулли, хурамалăх, хурăн милĕкĕ, хурăн шывĕ, хырлăх, чăрăшлăх, шăлан çырли, шĕшкĕ мăйăрĕ, шĕшкĕлĕх, юманлăх, юман йĕкелĕ.

**Тĕрлĕ ӳсен - тăран ячĕсем:** тулă, ыраш, урпа, сĕлĕ, пăрçа, пăри, кукуруза, вир, вĕлтĕрен, пултран, мăян, хупах, хăях, пиçен, армути, куршанак, кашкăр ути, утмăл турат, йыт пырши, чăрăш тарри;

йĕкел, хыр (юман) йĕкелĕ, кăчкă, хурăн кăчки, кăчкăллă, папак, чечек папакĕ, папкалан, пучах, сапака, хурлăхан сапаки, сĕткен, хурăн сĕткенĕ, çеçке, роза (сирень) çеçки, çеçкене лар, çеçкелен, çулçă, çулçăллă, çырла, çырла шывĕ, çырла пиçнĕ, турат, хунав турат, туратлă, тымар, йывăç тымарĕ, хулă, хăва хулли, хунав, чие хунавĕ, хунав вăрман, хунав яр, хурлăхан хунавĕ, чечек, чечек йăранĕ, чечек çыххи, чечеке лар.

**Кăмпа ячĕсем:** кăмпа, ăвăс кампи, масла кăмпи, çерем кăмпи, тислĕк кăмпи, уплюнкка, ут туги, хурăн кампи, шăна кăмпи, юман кăмпи, шурă кăмпа, мăйра кăмпи; çимелли кăмпа, наркăмăшлă кăмпа, кăмпаçă, кăмпана çӳре, кăмпа тат, кăмпа яшки.

**Чĕлхене ансат тишкересси, терминсемпе усă курасси**

**Алфавит.** Саспаллисен ячĕсем тата йĕрки. Уçă тата хупă сасăсем. Хытă тата çемçе сасăсем.

Пĕр-пĕр саспаллипе пуçланакан сăмахсене словарьте шыраса тупма вĕрентесси.

Самахсене алфавит йĕркипе вырнаçтарма хăнăхтарасси (пуçламăш саспалли тăрăх).

**Япалана пĕлтерекен сăмахсем.** Вĕсене *кам?* тата *мĕн?* ыйтусем тăрăх тупасси.

**Япала ĕçне пĕлтерекен сăмахсем.** Вĕсене *мĕн тăвать? мĕн тăвĕ? мĕн турĕ?* ыйтусем тăрăх тупасси.

**Япалан тата унăн ĕçĕн паллине пĕлтерекен сăмахсем,** вĕсене *мĕнле?* ыйту тăрăх тупасси.

**Сăмахсене вĕсен пĕлтерĕшĕсене кура ушкăнласси.** Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсем *(хура - шурă, пысăк - пĕчĕк, сарлака - ансăр, пылак - йӳçĕ).* Çывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсем: *васка - хыпалан, кил - пыр, усал - хаяр, аван - лайăх, илемлĕ - хитре, чипер.*

**Лексикăпа тематика ушкăнĕсем:** а) тĕс ячĕсем *(хĕрлĕ, сарă, шурă, хура, хăмăр, кăвак* т.ыт.те; *дурен, тура, хала, ула, сара-хала* (лаша сличен); а) 9ьшна хаклакан самахсем *(чилер, илемлĕ, тирпейлĕ, тăрăшуллă, ĕçчен, кахал, наян, мăнтăр, начар* т.ыт.те).

**Предложени.** Пуплеври предложенисене уйăрасси (маларах вĕреннине çирĕплетесси). Предложении тĕп (подлежащипе сказуемай) тата кĕсĕн членĕсем (ячĕсене асăнмасăр).Тĕрлĕ калăплă (тытăмлă) предложенисем хăнăхтарасси. Вĕсене *(кам? мĕн? камăн? мĕнĕн? кама? мĕне? камра? мĕнре? камран? мĕнрен? кампа? мĕнпе? камсăр? мĕнсĕр? камшăн? мĕншĕн/)* ыйтури сăмахсемпе анлăлатасси.

**Пунктуаци.** Предложени вĕçне пăнча, ыйту тата кăшкăру паллисем лартасси.

**Орфографи.** 1) Хытă уçă сасăллă сыпăк е сăмах вĕçĕнчи [л'], [н'], [т'] сасăсене *л, н, т* саспаллисем хыççăн çемçелĕх палли *(ь)* çырса палăртасси: *выльăх, кукăль, супăнь, мăкăнь, халь, ахаль, мăкăль, шукăль; ларать, вылять, чупать, тăрăшать.*

2) Уйаракан çемçелĕх палли *(ь)* çырасси: *мăрье, кĕсье, тухья, Марье.*

3) Вăрăм хупă сасса икĕ пĕр пек саспаллипе палăртасси:

ăру-тăванлăх сăмахĕсенче: *атте, анне, асатте, шăллăм,аппа,кукка, мăнакка;*

çупталăк вăхăчĕсен ячĕсенче: *çулла, хĕлле, кĕркунне, çуркунне;*

хальхи вăхăтри нумайлă хисепри 3-мĕш сăпатри глаголсен формисенче: *вулаççĕ, вуламаççĕ, ĕçлеççĕ, ĕçлемеççĕ, выляççĕ, вылямаççĕ.*

4) Сăмаха пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарасси: *ма-ши-на, вы-ля, япа-ла, пĕ-лĕт-сем.*

5) Çын ячĕпе хушаматне тата ашшĕ ятне, выльăхсемпе чĕр чунсен уйрăм ячĕсене, хула, ял, урам, юхан шыв ячĕсене пысăк саспаллирен пуçласа çырасси: *Иванова Мария Васильевна, Михайлов Иван Викторович, Мăрмăр, Кампур, Улайкка, Аньяр, Хураçка, Канаш, Шупашкар, Шурча, Çавал, Кĕçĕн Çавал, Атăл, Сĕве.*

6) Вырăс чĕлхинчен йышăннă хăш-пĕр сăмахсене вырăс чĕлхинчи пекех çырасси: *а) Миша, Наташа, Коля, Петя, Таня;*

*а) машина, трактор, комбайн, завод, фабрика, самолёт, ракета;*

*б) парта, учитель, директор;*

*в) колхоз, ферма, сад, дыня, помидор;*

*г) кухня, стакан, щётка.*

# Уроксене кашни темăна валли сехет шутне уйăрса парса планлани

## 1 класра ирттерекен чăваш чĕлхи урокĕсен тематика планĕ

Эрнере 1 сехет (34 сехет)

| № | Урок теми | Сехет шучĕ |
|---|---|---|
| 1 | Шкула | 1 |
| 2 | [а] сасă, А; а сас паллисем. [ă] сасă; А,ă сас паллисем. | 1 |
| 3 | [у] сасă, У,у сас паллисем. [ӳ] сасă; Ӳ,ӳ саспаллисем | 1 |
| 4 | [н] сасă; Н, н сас паллисем. | 1 |
| 5 | [л] сасă; Л, л сас паллисем | 1 |
| 6 | [м] сасă; М, м сас паллисем. | 1 |
| 7 | [т] сасă; Т, т сас паллисем. | 1 |
| 8 | [п] сасă; П:п сас паллисем. | 1 |
| 9 | [ш] сасă; Ш, ш сас паллисем. | 1 |
| 10 | [р] сасă; Р,р сас паллисем. | 1 |
| 11 | [ы] сасă; Ы,ы сас паллисем. | 1 |
| 12 | [в] сасă; В: в сас паллисем. | 1 |
| 13 | [х] сасă; Х, х сас паллисем. | 1 |
| 14 | [и] сасă; И, и сас паллисем. | 1 |
| 15 | [э] сасă; е сас палли. [э] сасă, Э, э сас палли. | 1 |
| 16 | [ĕ] сасă; ĕ сас паллисем. | 1 |
| 17 | [ с ] сасă; С, с сас паллисем; [Ç] сасă; Ç, ç саспаллисем | 1 |
| 18 | [к] [к´] сасăсем; К,к саспаллисем | 1 |
| 19 | [Ч] сасă; Ч,ч саспаллисем | 1 |
| 20 | çемçелĕх палли(ь); уйăракан хытăлăх (Ъ) | 1 |
| 21 | [Й] сасă; Й,й саспаллисем | 1 |
| 22 | [Йу]сыпăк, Ю,ю саспаллисем Йу]сыпăк, Ю саспаллин иккĕмĕш пĕлтерĕшĕ | 1 |
| 23 | [Йа]сыпăк, Я,я саспаллисем; Я саспаллин иккĕмĕш пĕлтерĕшĕ | 1 |
| 24 | Е,е саспаллисем [йэ] сыпăка пĕлтерни | 1 |
| 25 | [о] сасă, О,о сас паллисем; ё (о) сас палли | 1 |
| 26 | [б] [б] сасăсем, Б б сас паллисем | 1 |
| 27 | [г] [г] сасăсем, Г г сас паллисем | 1 |
| 28 | [ д] [д] сасăсем, Д д саспаллисем | 1 |
| 29 | [з] [з’] сасăсем;З, з сас паллисем | 1 |
| 30 | [ф] [ф’] сасăсем; Ф, ф сас паллисем | 1 |
| 31 | [ж] сасă;Ж, ж сас паллисем | 1 |
| 32 | [ц] сасă;Ц, ц сас паллисем; [щ] сасă;Щ, щ сас паллисем | 1 |
| 33 - 34 | «Сывă пул: пĕрремĕш кĕнекемĕр!» Урок-уяв | 2 |

**2 класра ирттерекен**
**чăваш чĕлхи урокĕсен тематика планĕ**
Эрнере 1 сехет (34 сехет)

| № | Урок теми | Сехет шучĕ |
|---|---|---|
| **1-мĕш класра вĕреннине аса илни ( сехет)** | | |
| 1 | Предложени, сăмах, сасă, сас палли. | 1 |
| 2 | Çырса илни «Хура кĕр» | 1 |
| **Сасă тата сас палли (сехет)** | | |
| 3 | Алфавит | 1 |
| 4 | «Кĕркунне» темăпа калав çырасси. | 1 |
| 5 | Уçă сасăсемпе хупă сасăсем. | 1 |
| 6 | Хытă уçă сасăсемпе çемçе уçă сасăсем. | 1 |
| 7 | Хытă уçă сасăллă сăмахсенче çемçелĕх палли (ь) çырасси. | 1 |
| 8 | Изложени «Ăшă чух» | 1 |
| 9 | Уйăракан çемçелĕх палли (ь) çырасси. | 1 |
| 10 | Вăрăм хупă сасса икĕ пĕр пек сас палли çырса палăртни. | 1 |
| 11 | Тĕрĕслев диктанчĕ «Шупашкар». | 1 |
| 12 | Сăмах сыпăкĕ. | 1 |
| 13 | Сăмахсене пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарасси. | 1 |
| **Сăмах. Япала ячĕ. (с.)** | | |
| 14 | Кам? Мĕн? ыйтуллă сăмахсем. | ? |
| 15 | Тĕрĕслев диктанчĕ «Пыл хуçисем» | 1 |
| 16 | Пĕр япалана тата нумай пĕлтерекен сăмахсем. | 1 |
| 17 | Çын ятне, хушаматне, ашшĕ ятне пысăк сас паллинчен пуçласа çырасси. Паллашу сăмахĕсем. | 1 |
| 18 | Выльăх- чĕрлĕх ячĕсене пысăк сас паллинчен пуçласа çырасси. | 1 |
| 19 | Тĕрĕслев диктанчĕ «Шанчăклă юлташ». | 1 |
| 20 | Çырса илни «Кампур». | 1 |
| 21 | Хула, ял, юхан шыв ячĕсене пысăк сас паллинчен пуçласа çырасси. | 1 |
| **Ĕçе пĕлтерекен сăмахсем (18 с.)** | | |
| 22 | Глагол. Мĕн тăвать? Мĕн тăваççĕ? Мĕн турĕ? Мĕн турĕç? ыйтусенчи глаголсем. | 3 |
| 23 | Тĕрĕслев диктанчĕ «Çăлтăрсем чĕнеççĕ». | 1 |
| 24 | Хирĕçле тата çывăх пĕлтерĕшлĕ глаголсем (антонимсем). | 1 |
| 25 | Çырса илни «Надежда Павлова». | 1 |
| **Япала паллине пĕлтерекен сăмахсем (12 с.)** | | |
| 26 | Япала паллине пĕлтерекен сăмахсене мĕнле? ыйту лартса тупасси. | 1 |
| 27 | Тĕрĕслев диктанчĕ «Ирхине». | 1 |
| 28 | Хирĕçле тата пĕрешкел пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем (антонимсем) | 1 |
| **Предложени** (13 с.) | | |
| 29 | Пуплеве предложенисем çине уйăрасси. | 1 |
| 30 | Предложенин тĕп членĕсемпе кĕçĕн членĕсем. | 1 |
| 31 | Сочинени «Çуркунне çывхарать» | 1 |
| 32 | Предложенин тĕп членĕсемпе кĕçĕн членĕсем. Предложени членĕсем хушшинчи çыхăну. | 1 |
| 33 | Калуллă, ыйтуллă, кăшкăруллă предложенисем. | 1 |
| 34 | Тĕрĕслев диктанчĕ «Çурхи чечексем» | 1 |

**3 класра ирттерекен**
**чăваш чĕлхи урокĕсен тематика планĕ**
Эрнере 1 сехет (34 сехет)

| № | **Урок теми** | **Сехет шучĕ** |
|---|---|---|
| 1 | Текст. Предложени. Сăмах. | 1 |
| 2 | Сасăсемпе сас паллисем. | 1 |
| 3 | Вăрăм хупă сасăсене икĕ сас паллипе палăртасси. | 1 |
| 4 | Ч сасă умĕнчи л , н , хупă сасăсен çемçелĕхне ятарласа палăртманни. | 1 |
| 5 | Вырăс чĕлхинчен çыру урлă йышăннă сăмахсенче б, г, д, ж, з, ф, ц, щ сас паллисем çырасси. | 1 |
| 6 | Творчество ĕçĕ. Кĕске изложени «Пиччĕшĕпе шăллĕ». | 1 |
| 7 | Тĕрĕслев ĕçĕ. Çырса илни «Кăмпа çумăрĕ». | 1 |
| 8 | Калуллă предложени. | 1 |
| 9 | Ыйтуллă предложени. | 1 |
| 10 | Хистевлĕ предложени. Кăшкăруллă предложени. | 1 |
| 11 | Предложенин тĕп членĕсемпе кĕçĕн членĕсем. | 1 |
| 12 | Сăмах майлашăвĕ. Предложенири сăмахсен çыхăнăвĕ. | 1 |
| 13 | Ансăр тата анлă предложенисем. | 1 |
| 14 | Тĕрĕслев ĕçĕ.Диктант «Валерик». | 1 |
| 15 | Сăмах тытăмĕ. Тымар тата аффикссем. | 1 |
| 16 | Сăмаха улăштаракан тата тăвакан аффикссем. | 1 |
| 17 | Аффикслă сăмахсене тĕрĕс çырасси. | 1 |
| 18 | Тĕрĕслев ĕçĕ. Диктант. «Кăмпара». | 1 |
| 19 | Творчество ĕçĕ. Сочинени «Вĕçсе килĕр, апатланăр». | 1 |
| 20 | Япала ячĕн пĕлтерĕшĕ тата ыйтăвĕсем. | 1 |
| 21 | Япала ячĕсем хисеп тăрăх улшăнни. Ш, с, ç сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсене нумайлă хисепре тĕрĕс çырасси | 1 |
| 22 | Тĕрĕслев ĕçĕ. Çырса илни "Алăсем" | 1 |
| 23 | Глагол пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем. | 1 |
| 24 | Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ глаголсем (антонимсем). Çывăх пĕлтерĕшлĕ глаголсем (синонимсем). | 1 |
| 25 | Творчество ĕçĕ. Сочинени «Çуркунне». | 1 |
| 26 | Глагол улшăнăвĕ. Хальхи вăхăт. | 1 |
| 27 | Иртнĕ вăхăт. Пулас вăхăт. | 1 |
| 28 | Тĕрĕслев ĕçĕ. Пăхса çырни «Пĕчĕк тухтăр» | 1 |
| 29 | Паллă ячĕн пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем. Паллă ячĕ улшăнманни. | 1 |
| 30 | Паллă ячĕ япала ячĕпе тата ĕç-хĕлпе çыхăнни. | 1 |
| 31 | Тĕрĕслев диктанчĕ «Арбуз». | 1 |
| 32 | Çывăх пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем (синонимсем). Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем (антонимсем). | 1 |
| 33 - 34 | Вĕреннине аса илсе çирĕплетни. | 2 |

# 4 класс (17 сех)

| № | **Урок теми** | **Сехет шучĕ** |
|---|---|---|
| 1 | Пĕр тымарлă сăмахсем. Сăмах аффикс хушăннипе пулни | 1 |
| 2 | Мăшăр сăмахсем. Сăмахсене икĕ хут калани. | 1 |
| 3 | Текст теми. Текстăн тĕп шухăшĕ. Текст тытăмĕ | 1 |
| 4 | Пĕр йышши членсем çинчен ăнлантарни. Пĕр йышши членсене çыхăнтаракан | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| | союзсем | |
| 5 | **Изложени «Çуллă яшка»** | 1 |
| 6 | Япала ячĕсен вĕçленĕвĕ. Падежсем. Япала ячĕсене нумайлă хисепре вĕçленни. | 1 |
| 7 | Хупă тата уçă сасăпа пĕтекен япала ячĕсен вĕçленĕвĕ | 1 |
| 8 | **Тĕрĕслев диктанчĕ « Чĕкеç»** | 1 |
| 9 | Паллă ячĕсен пĕлтерĕшĕ, пулăвĕ. | 1 |
| 10 | Паллă ячĕсен тĕп тата танлаштаруллă степенĕсем. Паллă ячĕсен вăйлă степенĕ | 1 |
| 11 | Хисеп ячĕсен пĕлтерĕшĕ. | 1 |
| 12 | **Тĕрĕслев ĕçĕ. Çырса илни. «Йĕкел юратакан кайăксем»** ***(ЧЧ, 138 стр.)*** | 1 |
| 13 | Местоимени пĕлтерĕшĕ. Сăпат местоименийĕсем. | 1 |
| 14 | Глаголăн пурлă тата çуклă формисем. | 1 |
| 15 | Глагол вăхăт, сăпат, хисеп тăрăх улшăнни. | 1 |
| 16 | Хальхи,иртнĕ тата пулас  вăхăтри глаголсен сăпатланăвĕ | 1 |
| 17 | **Тĕрĕслев диктанчĕ « Çумăр»** | 1 |
| | | |

**1I-IV классенче диктанта çак виçесемпе хакламалла:**

**«5» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** ача орфографипе пунктуации йăнăшĕсем пачах туман, орфограммăсене тӳрлетмен, каллиграфии виçисене пăхăнса (саспаллисен ĕлкисене уçăмлă, пĕрешкел чалăштарса т.ыт.те) çырнă, анчах уйрăм çитменлĕхсем (сиктерсе хăварнă саспаллисене кĕртсе лартни, саспалли ĕлкине тӳрлетни т.ыт.те) пур пулсан.

**«4» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** çыру ĕçĕнче орфографи йăн-шĕсем 2, пунктуации йăнăшĕ 1 ытла маар, е 1 орфографи, 2 пунктуаци йăнăшĕ, ĕçе тирпейлĕ çырнă, анчах темиçе çĕрте каллиграфии виçисене тивĕçтермен, пĕрĕпĕр орфограммăна тӳрлетни пур пулсан.

**«3» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** орфографипе пунктуации йăнăшĕсем 6-ран ытла маар, диктантра (вариантсем) орфографи йăнăшĕсем 3-рен 5-е çити, пунктуации йăнăшĕсем 3 таран, е 4 орфографи, 2 пунктуаци, е 5 орфографи, 1 пунктуаци йăнăшĕ, ĕçе тирпейсĕр, каллиграфи виçисене пăхăнса çырман тата тĕрлĕ орфограммăна тӳрлетни 1-2 пулсан.

**«2» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** диктантра орфографи йăнăшĕсем 6, пунктуации йăнăшĕ 3-4-ран ытла, ĕçе тирпейсĕр, каллиграфи виçисене пăхăнмасăр çырнă, 3-5 тӳрлетни пур пулсан.

**«1» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** çыру ĕçĕнче орфографи йăнăшĕсем 8-тан, пунктуации йăнăшĕсем 5-рен ытла, тӳрлетни чылай пулсан.

**Диктантра çаксене йăнăш тесе шутламалла:**

а) сăмаха орфографи правилисене пăсса çырни, саспаллисене сиктерсе хăварни, саспаллисене е сăмах сыпăкĕсене ылмаштарса лартни, пĕр сăмаха тепĕр сăмахпа улăштарни;

ă) вĕреннĕ правилăсене пĕлменнипе чарăну пали лартман е тĕрĕс мар лартнă пулсан.

**Диктантра çаксем йăнăш шутланмаççĕ:**

а) ку таранччен вĕренмен орфографи тата пунктуации правилисемпе çыхăннă йăнăшсем (кун пек сăмахсене класс хăми çине çырса кăтартмалла);

ă) предложени вĕçĕнче пĕр хутчен пăнчă лартмасăр хăвартнă, тепĕр предложени пуçламăшне пысăк саспаллипе çырнă пулсан;

б) текст шухăшне улăштармасăр пĕр сăмах вырăнне тепĕр сăмах улăштарса çырнă пĕр тĕслĕх кăна пулсан.

**Çаксене пĕр йăнăш тесе шутламалла:**

а) тĕрĕс мар çырнă сăмах икĕ е темиçе хутчен тĕл пулсан, çав правилăпа çыхăннă йăнăша тепĕр сăмахра та тунă пулсан, вĕсене пĕр йăнăш тесе шутламалла;

ă) пысăках маар 2 çитменлĕхе (кăлтăка) пĕр йăнăш тесе шутламалла.

**Çаксене пысăках маар çитменлĕхсем (кăлтăксем) шутланаççĕ:**

а) сăмахра пĕр саспаллинех асăрхамасăр икĕ хут çырни (*паяян, ыраан* т.ыт.те);

ă) сăмаха çырса пĕтерейменни (*кăранта…, кĕнек…* т.ыт.те);

б) пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарнă чухне сăмахăн пĕр пайне асăрхамасăр пăрахса хăварни (*кĕ(не)-ке, те(ле)-фон* т.ыт.те);

в) предложенире пĕр сăмахах икĕ хут çырни.

**Пуплев тишкерĕвне хакламалли виçесем**

Чĕлхе тишкерĕвĕ евĕрлĕ тĕрĕслев ĕçĕсене хакланă чухне çак виçесемпе усă курмалла:

**«5» паллă** ача ĕçĕ пĕр йăнăшсăр пулсан, вăл терминсемпе правилăсене лайăх пĕлни тата хăй пĕлĕвĕпе тĕрлĕ йышши ĕçсем тунă чухне усă курма пултарни палăрсан лартмалла.

**«4» паллă** ача терминсемпе правилăсене лайăх пĕлсен, вĕсемпе грамматика тишкерĕвĕ тунă чухне пĕлсе усă курсан, сăмахсемпе предложенисене тишкерес ĕçĕн ¾ пайне тусан лартмалла.

**«3» паллă** ача вĕреннĕ материала ăнланни палăрсан, хăй пĕлнипе усă курса тишкерĕвĕн çуррине пурнăçласан лартмалла.

**«2» паллă** ача вĕреннĕ материала начар пĕлсен, вăл «3» паллă илмелĕх хуравламасан е пуплев тишкерĕвĕн ытларахăш пайне пурнăçлаймасан лартмалла.

**«1» паллă** ача пуплев тишкерĕвне пачах пурнăçламасан лартмалла.

**Пĕтĕмĕшле илсен, изложенипе сочинение II-IVклассенче çапла хакламалла:**

**«5» паллă** шухăшсемпе (содержанипе) пуплеве çакăн пек йĕркеленĕшĕн лартмалла: автор текстне тĕрĕс тата çыхăнуллă çырса кăтартнă (изложени), шухăш темăпа килĕшӳллĕн, çыхăнуллăн аталанса пырать, факт йăнăшĕсем çук, сăмах йышĕ пуян, пуплев тĕлĕшĕнчен текста тĕрĕс те палăртуллă хайланă пулсан.

<u>Тĕрĕс çырнăшăн</u>: орфографипе пунктуации йăнăшĕсем çук, 1-2 тӳрлетни пулма пултарать.

**«4» паллă** шухăшсемпе (содержанипе) пуплеве çакăн пек йĕркеленĕшĕн лартмалла: автор текста çителĕклĕ таран туллин çырса кăтартман (изложени), темăна уçса панă, анчах уйрăм вырăнсенче шухăш çыхăнăвĕ татăлса кайни, тĕрĕсех маар çырни тата пуплев çитменлĕхĕсем пур. Пуплев тĕлĕшĕнчен пĕтĕмпе 3 йăнăшран ытла маар, содержанипе тунă йăнăшсем 3 таран тунă пулсан.

<u>Тĕрĕс çырнăшăн:</u> 2 орфографи, 1 пунктуаци йăнăшĕнчен ытла маар е 1 орфографи, 2 пунктуаци йăнăшĕ тунă, пĕр-пĕр орфограммăна тӳрлетни пур пулсан. (Вĕреннĕ правилăсемпе тунă йăнăшсене çеç шутламалла).

**«3» паллă** шухăшсемпе (содержанипе) пуплеве çакăн пек йĕркеленĕшĕн: автор текстĕнчен кăштах пăрăннă (изложени), темăпа килĕшӳллĕ тата çыхăнуллă çырман, 2-3 предложение тĕрĕсех йĕркелеймен, сăмах йышĕ чухăн, пуплев тĕлĕшĕнчен çитменлĕхсем пур, шухăш аталанăвĕнче (содержантре), текста йĕркелессинче тата пуплевре йăнăшсем пĕтĕмпе 5 таран пулсан.

<u>Тĕрĕс çырнăшăн:</u> 3-5 орфографи йăнăшĕ таран, вариантсем: 3 орфографи, 2-3 пунктуаци йăнăшĕ, е 4 орфографи, 2 пунктуаци, е 5 орфорграфи, 1 пунктуации йăнăшĕ тунă, тĕрлĕ орфограммăсене тӳрлетни 1-2 пулсан.

**«2» паллă** шухăшсемпе (содержанипе) пуплеве çакăн пек йĕркеленĕшĕн: ĕçе тема тăрăх çырман, автор текстĕнчен чылай пăрăнса кайнă (изложени), текста тĕрĕсех маар ăнланнă вырăнсем (факт йăнăшĕсем) пур, йĕркеллĕ, çыхăнуллă çырман, уйрăм

пайсем хушшинче ҫыхӑнулӑх ҫук, сӑмах йышӗ чухӑн. Текста тата пуплеве йӗркелес енӗпе 6 ҫитменлӗхпе йӑнӑшсем пур пулсан.

Тӗрӗс ҫырнӑшӑн: орфографи йӑнӑшӗсем 3-4-ран ытла, 3-5 тӳрлетни пур пулсан.

**«1» паллӑ** содержанипе пуплеве йӗркеленӗшӗн: автор текстне пачах ҫырса кӑтартман (изложени), пуплеве тата текста йӗркелес тӗлӗшпе 7 йӑнӑшран ытларах тунӑ.

Тӗрӗс ҫырнӑшӑн: 8 орфографи, 5 пунктуаци йӑнӑшӗсенчен ытла, 7 ҫӗрте тӳрлетни пур.

Изложенисемпе сочиненисенче хӑш йӑнӑшсем ҫитменлӗх (кӑлтӑк) шутланнине, пӗр йӑнӑш пулнине т.ыт.те диктанта хакланӑ чухнехи виҫесене шута илсе хакламалла.

**Асӑрхаттарни:** пултарулӑх ӗҫӗсене хакланӑ чухне таса та илемлӗ ҫырнине, калиграфи виҫисене еплерех пӑхӑннине (диктанта пахаланӑ чухнехи пекех) шута илсе хакламалла.

**Научно-методическая литература**

1.Чăваш чĕлхи методики (Методика чувашского языка): Для учителей начальной школы и студентов факультета начальных классов/ Л.П. Сергеев, Д.С. Филиппова, Р.С. Максимова, Р.И. Трокина; Под ред. Л.П. Сергеева. - Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2002. – 255 с.

2. Артемьева Т.В. Вопросы методики обучения грамоте в чувашской школе. Монография. - Чебоксары: Чуваш. госпедуниверситет им. И.Я. Яковлева, 2003. – 88 с.

3. Артемьева Т.В. Букварь умĕнхи тапхăрта изложени çырмашкăн вĕрентме хатĕрлесси (статья) // Чувашский язык и литература: теория и методика: сб. ст : – Чебоксары : ЧГПУ им. И.Я.Яковлева, 2006. − С. 35-39

4. Артемьева Т.В. Порядок усвоения звуковых и слоговых трудностей при обучении чувашской грамоте/ Т.В. Артемьева// Вестник ЧГПУ им. И.Я.Яковлева, - 2004. – Внеочередной выпуск по итогам конференции, посвященной 75-летию профессора Петрова Николая Ивановича. – С. 83-88

5. Артемьева Т.В. Ачасен пĕлĕвне тестсемпе тĕрĕслени (Выявление уровня знаний при помощи тестов)/Т.В. Артемьева // Актуальные вопросы обучения и воспитания младших школьников: сб. ст: – Чебоксары: ЧГПУ им. И.Я.Яковлева, 2000. − С. 40-42

6. Артемьева Т.В. Чăваш чĕлхи урокĕсенче электрон пособийĕсемпе усă курасси (Использование элетронных пособий на уроках чувашского языка)/Т.В. Артемьева // Народная школа. – 2007. - №5. – С. 71-73.

7. Артемьева Т.В. Чăвашла вулама-çырма вĕрентмелли таблицăсемпе ĕçлесси (Работа с таблицами на этапе обучения грамоте)/Т.В. Артемьева // Народная школа. – 2007. - №5. – С. 71-73.

8. Кульева А.Р. Личностно-ориентированное обучение на уроках родного языка в начальной школе/А.Р. Кульева. – Чебоксары: Новое время, 2010. – 69 с.

9. Кульева А.Р. Çĕнĕ стандартăн çивĕч ыйтăвĕсем (Острые врпросы нового стандарта)/А.Р. Кульева// Народная школа. - 2010. - № 3. – С.35-37.

10. Волков М.К., Артемьева Т.В., Сергеев Л.П. Уроки родного языка в первом классе/Т.В. Артемьева. – Чебоксары: Чувашское книжное изд-во, 2007. – 149 с.

11. Сергеев Л.П. Чăваш чĕлхине пуçламăш шкулта вĕрентессин хăш-пĕр ыйтăвĕсем (Некоторые вопросы обучения чувашскому языку в начальной школе)/ Л.П. Сергеев. – Чебоксары: ЧГПУ им. И.Я.Яковлева, 1998. – 111 с.

12. Печников О.И. Обучение составлению чувашского текста в начальных классах чувашской школы/ О.И. Печников. – Чебоксары: Изд-во Чуваш ун-та, 2007. – 127 с.

13. Виноградов Ю.М. Чăваш орфографине шкулта вĕрентесси (Обучение чувашской орфографии в школе)/ Ю.М. Виноградов. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2007. – 111 с.

14. Сергеев Л.П. Ĕç хучĕсем çырасси: Методика пособийĕ (Написание деловых писем: Методическое пособие)/ Л.П.Сергеев. – Чебоксары, 1990. – 38 с.

15. Сергеев Л.П. и др. Чăваш чĕлхи методикин ыйтăвĕсем (Вопросы методики чувашского языка)/ Л.П. Сергеев, Д.С. Филиппова, Р.С. Трокина, Р.С. Максимова. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2002. – 255 с.

16. Кульева А.Р. Теория и практика обучения глаголу в начальных классах чуващской щколы/ А.Р. Кульева. - Чебоксары: Новое время, 2006. – 138 с.

**Словари**

1. Чăваш чĕлхин орфографи словарĕ: (Орфографический словарь чувашского языка): для 1 – 4 классов/ Под ред. Ю.М. Виноградова. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1995. – 103 с.

2. Виноградов Ю.М. и др. Орфографи словарĕ: Тĕрĕс çырмалли правилăсем (Орфографический словарь: Правила правописания). – Чебоксары: РИО ЧРИО, 2002. – 304 с.

3. Скворцов М.И., Скворцова А.В. Чувашско-русский и русско-чувашский словарь. Изд. 4-е/ М.И. Скворцов, А.В. Скворцова. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2007. - 432 с.

4. Васильева Е. Ф. Синонимсен словарĕ (Словарь синонимов)/ Е.Ф. Васильева. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1983. – 128 с.

5. Чувашско-русский словарь/ Под ред. М. И. Скворцова. - М.: Сов. энциклопедия, 1979. – 712 с.

6. Чăваш чĕлхин орфографи словарĕ (Орфографический словарь чувашского языка)/ Под ред. А.А. Алексеева. – Чебоксары: Чуваш.кн. изд-во, 2002. – 399 с.

7. Сергеев Л.П., Павлов В.В. Чăваш чĕлхин фразеологи словарĕ (Фразеологический словарь чувашского языка)/ Л.П. Сергеев, В.В. Павлов. – Чебоксары: ЧГПУ им. И.Я.Яковлева, 2007. – 62 с.

8. Сергеев Л.П., Виноградов Ю.М. Чăвашла тĕрĕс çырасси (Чувашское правописание)/ Л.П. Сергеев, Ю.М. Виноградов. – Чебоксары, 1995. – 48 с.

9. Чăваш орфографийĕпе пунктуацийĕ: Тĕрĕс çырмалли правилăсем (Чувашская орфография и пунктуация: Правила правописания)/ Под ред. проф. И.А. Андреева. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1992. – 80 с.

10. Чернов М.Ф. Чувашско-русский фразеологический словарь/ М.Ф. Чернов. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1982. – 176 с.